**Утă çинче**

Ыраш пусси хушшинче
Уй пуçлăхĕ - путене.
Ыраш уйнĕ мухтаса
Туртса ячĕ юррине:

"Пĕт-пĕтĕм!.. Пĕт-пĕтĕм!
Яш çын, пăх-ха уялла,
Санăн вăйна пухмалла,
Паян утта тухмалла,
Васкăр ĕнтĕ сывлăмла!"

"Илттерĕп! Илттерĕп!
Тахçантанпа кĕтсеттĕм –
Хресчен, утту пит хÿхĕм.
Килех, илех çавуна,
Хирсе тăках çаранна!.."

"Хресченсем! Хресченсем!
Ан шеллĕрсем хул вăйне,
Халь хатĕрлĕр апатне,
Усрăр выльăх-чĕрлĕхне,
Аванлатăр пурнăçне!.."

"Ир, тем те! Ир, тем те!..
Ĕçхалăхĕ, ан çывăр,
Сан манмалла ыйхуна,
Тытиччен çех ĕç йывăр –
Пĕр тытсассăн вăл ăнать..."

"Илтетре?! Илтетре?!
Çÿçÿ-пуçу вĕçтĕр-и!
Вăран, васка уялла,
Вăйлăрах сик, ĕç чĕри,
Вăй пар - утă çулмалла!.."

Çапла ĕнтĕ хресченсем
Улăхра ут çулаççĕ,
Çависенĕн сассисем
Ĕçлĕх кĕвви калаççĕ.

Эс те çиçсе çитетĕн,
Кăкаратăн лашуна;
Çĕн çавуна илетĕн –

Тытăнатăн ут çулма.

Сулса яран савана
Аври çине уртăнса.
Çави касать - вăшлатать,
Курăк чунне кăларать.

Çупса яран мăкалсан
Лапаткана янратса,
Сăрнай кĕвви хăлхунта,
Вăй-хал вĕрет аллунта!..

1924

*Ваçанкка, Н. Утă çинче / Н. Ваçанкка // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 126.*